# МЧС России

Раççей Федерацийĕн Граждан оборонипе чрезвычайлă
лару-тăру тата çут çанталăк инкекне сирес енĕпе ĕçлекен министерстви

# Инкеке лекнисене пĕрремĕш пулăшу парасси

ПАМЯТКА

**Ку памяткăпа кашни çын усă курма пултарать.**

**Памяткăра тăван çĕршывпа ют çĕршыври опытсене тĕпе хурса инкеке лекнĕ, суранланнă тата ытти асап курнă, пурнăçа и сывлăха сиен кӳрекен чир-чĕрпе аптăранă çынсене пĕрремĕш пулăшу памалли хальхи сĕнӳсем çырса панă. Ку памятка çынсене пулăшу памалли теори никĕсĕсене тепĕр хут аса илме тата инкек-синкек чухне мĕн тумалли çинчен информаци парать.**

© ФГБУ «ЦЭПП МЧС РОССИИ», 2024

# ИНКЕКЕ ЛЕКНИСЕНЕ ПĔРРЕМĔШ ПУЛĂШУ ПАРАССИ

Мускав, 2024

**Пĕрремĕш пулăшу пама пĕлни инкеке лекнисен пурнăçĕпе сывлăхне çăлса хăварма пулăшать. Пĕрремĕш пулăшăва инкек-синкеке курса тăракансем тата çăлав службисен ĕçченĕсем пама пултараççĕ. Пĕрремĕш пулăшу пама вĕсен кирлĕ пĕлӳ илмелле. Çавăнпа та хальхи саккунпа пĕрремĕш пулăшу памалли правилăсене килĕшӳллĕ хальхи вĕренӳ пособийĕсем кăларасси пысăк пĕлтерĕшлĕ. Памяткăна Раççей Федерацийĕн Сывлăх сыхлав министерстви çирĕплетнĕ пĕрремĕш пулăшу памалли йĕркепе килĕшӳллĕн хатĕрленĕ. Памяткăра тĕрлĕ лару-тăрăва лексен тата суранлансан пĕрремĕш пулăшу памалли меслетсем пирки уçăмлăн çырса панă.**

*Раççей Федерацийĕн сывлăх сыхлав министерствин «Сывлăх сыхлавне йĕркелемелли тата информатизацилемелли наукăпа тĕпчевĕн тĕп институчĕ» ФПБУ аккредитаципе симуляци методика центрĕн ертӳçи, «Пĕрремĕш пулăшу паракан Раççейри общество» Пĕтĕм Раççейри общество организацийĕн председателĕ, медицина наукисен тухтăрĕ, профессор Дежурный Леонид Игоревич.*

**Пĕрремĕш пулăшу** – çын пурнăçне çăлса хăварас енĕпе ирттермелли ансат мероприятисен комплексĕ.

Унăн тĕллевĕ – пурнăça сиен кӳрекен пулăмсене сиресси, çавăн пекех малашнехи йывăрлăхсем çинчен систересси.

Раççей Федерацийĕн Сывлăх сыхлав министерствин 2024 çулхи çу уйăхĕн 3-мĕшĕнчи «Пĕрремĕш пулăшу памалли йĕркене çирĕплетесси çинчен» 220н №-лĕ хушăвĕпе килĕшӳллĕн (2024 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнчи 78363 регистраци номерĕпе РФ Юстици министерствинче регистрациленĕ) çынсен пурнăçне çăлса хăвармалли васкавлă 9 лару-тăру тата 9 мероприяти пур. Вĕсене кашниех алла илме пултарать.

## ПĔРРЕМĔШ ПУЛĂШУ ПАМАЛЛИ САМАНТСЕМ:

1. Тăн çухатни.
2. Сывлама чарăнни е юн чупма пăрахни.
3. Сывлав çулĕсене урăх япала лекни тата çакă пурнăçпа сывлăхшăн ытти хăрушлăх кăларса тăратни.
4. Юн тухни.
5. Суранланни, ăш-чике наркăмаш лекни, тискер чĕр чун çыртни е сăхни, электричество токĕ çапни, пиçсе кайни, радиаципе сиенленни.
6. Наркăмăшланни.
7. Наркăмăшлă чĕр чун çыртни е сăхни.
8. Шăнăр туртнипе пĕрле тăн çухатни.
9. Стресс çине психологи реакцийĕсем.

## Пĕрремĕш пулăшу памалли йĕрке:

1. Лару-тăрăва хак пар тата пĕрремĕш пулăшу пама хăрушсăрлăхпа тивĕçтер.
2. Инкеке лекнĕ çыннăн суранланнă вырăнтан юн юхнипе юхманнине тĕрĕсле. Юна чарма кирлĕ мерăсем йышăн.
3. Çыннăн пурнăç паллисем (пульс пуррине, хăй тĕллĕн сывланине) пуррипе çуккине палăрт.
4. Чĕрепе ӳпке реанимацийĕ ирттер. Пӳлĕннĕ сывлăш çулĕсене тасат, уçăлма пулăш.
5. Инкеке лекнĕ çынна пĕтĕмĕшле тĕрĕслесе тух тата вăл хăйне мĕнле туйнине (тăна кĕрсен) ыйтса пĕл. Суранланланнипе, ăш-чике наркăмаш лекнипе, тискер чĕр чун çыртнипе е сăхнипе, электричество токĕ çапнипе, пиçсе кайнипе, радиаципе сиенленннипе сăлтавланнă тата пурнăçпа сывлăхшăн хăрушлăх кăларса тăртакан ытти лару-тăрăва палăрт.
6. Сурансен характерне кура пĕрремĕш пулăшу пар.
7. Инкеке лекнĕ çынна тухтăр çырса панă эмелсене ĕçме пулăш.
8. Канлĕ вырнаçтарса вырттар.
9. Васкавлă пулăшу чĕнсе илĕр. Лару-тăрăва сăнаса тăр, психологи пулăшăвĕ пар. Инкеке лекнĕ çынна васкавлă пулăшу ушкăнĕ, медицина организацийĕсем, пĕрремĕш пулăшу паракан ятарлă службăсем патне илсе çитерме пулăш.

«Граждансен сывлăхне сыхламалли çинчен» 2011 çулхи чӳкĕн 21-мĕшĕнчи РФ Федераллă саккунăн 31-мĕш статйипе киĕшӳллĕн Раççейри кашни çын ятарлă пĕлӳ пулсан аманнисене инкеке лекнисене пĕрремĕш пулăшу пама пултарать. Унсăр пуçне çынна пĕрремĕш пулăшу панă чухне вăл вилсен е ăна ăнсăртран сиен кӳрсен пĕрремĕш пулăшу паракан çынна РФ Уголовлă, Административлă тата Гражданла Кодексĕсен «Питĕ кирлĕ чухне» (Крайняя необходимость) статйи хӳтĕлет.

# СОДЕРЖАНИ


Пĕрремĕш пулăшу памалли йĕрке 11

Аманнисене пĕр-пĕр инкек пулнă вырăнта пулăшмалли ĕçсен пĕтĕмĕшле йĕрки 12

1. Лару-тăрăва хак парасси тата пурнăça хăрушлăх кăларса тăратакан факторсене сиресси. Аманнă çынна куçарасси. 14

1.1. Инкеке лекнĕ çынна автомашинăран е çитме йывăр вырăнтан илсе тухасси 15

1.2. Инкеке лекнĕ çынна илсе тухмалли правилăсем. 16

2. Инкеке лекнĕ çынна пĕтĕмĕшле тĕреслесси. Юн юхсан пĕрремĕш пулăшу парасси. 19

3. Çын сывланине тата тăн пуррипе çуккине палăртмалли мелсем. 24

4. Чĕрепе ўпке ĕçлесе кайма пулăшасси. 25

4.1. Кăкăр кăшкарĕ çине пусмалли правилăсем. 25

4.2. Ирĕксĕрлесе сывлăш çавăрса пулăшмалли меслетсен йĕрки. 27

4.3. Хăй халлĕн ĕçлекен дефибриляторпа усă курасси. 27

4.4. Сывлăш çулĕсенче урăх япала кĕрсе ларнипе çын сывлаймасан пĕрремĕш пулăшу парасси. 29

5. Инкеке лекнĕ çынна тĕплĕн тĕрреслесси, сывлăхĕпе кăсăланасси. 31

6. Суранланлансан, радиаципе сиенленсен, температура хăпарсан, хими япалисемпе наркăмăшлансан, тискер чĕр чун çыртсан е сăхсан пĕрремĕш пулăшу парасси. 32

6.1. Суранлансан пĕрремĕш пулăшу. 32

6.1.1. Пуç амансан. 32

6.1.2. Куçпа куç хупанкисем суранлансан. 33

6.1.3. Сăмсаран юн кайсан. 34

6.1.4. Мăй амансан. 35

6.1.5. Кăкăр кăшкарĕ амансан. 35

6.1.6. Вар-хырăм амансан. 37

6.1.7. Алă-ура хуçăлсан. 38

6.2. Наркăмăшлансан пĕрремĕш пулăшу. 41

6.2.1. Çăвар урлă наркăмăшлансан. 41
6.2.2. Сывлав çулĕсем урлă наркăмăшлă япаласем лексен. 42
6.2.3. Куçа амантсан. 43
6.3. Ӳт пиçсе кайсан. 44
6.4. Ăшă çапса ӳкерсен. 46
6.5. Тăм илсен. 48
6.6. Шăнса пăсăлсан. 49
6.7. Электричество токĕ çапсан. 49
6.8. Тискер чĕр чун сăхсан е çыртсан. 51
6.8.1. Çĕлен сăхсан пĕрремĕш пулăшу.
6.8.2. Хурт-кăпшанкă çыртсан. 51
6.9. Тăн çухатсан. 53
6.10. Шăнăр туртсан. 53
7. Тухтăр çырса панă эмелсене ĕçме пулăшасси. 54

**8. Инкеке лекнĕ çынна канлĕ вырăн туса выртарасси.** 55

**9. Психологи пулăшăвĕ парасси.** 56

# ПĚРРЕМĚШ ПУЛĂШУ ПАМАЛЛИ ЙĔРКЕ:

1. Лару-тăрăва хак парасси тата пĕрремĕш пулăшу пама хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси.

2. Инкеке лекнĕ çыннăн суранланнă вырăнтан юн юхнипе юхманнине тĕрĕслесси. Юна чарма кирлĕ мерăсем йышăнасси.

3. Çыннăн пурнăç паллисем пуррипе çуккине палăртасси (пульс пуррине, хăй тĕллĕн сывланине).

**Тăна кĕнĕ:**

5. Инкеке лекнĕ çынна пĕтĕмĕшле тĕрĕслесе тухасси тата вăл хăйне мĕнле туйнине (тăна кĕрсен) ыйтса пĕлесси. Суранланланнипе, ăш-чике наркăмаш лекнипе, тискер чĕр чун çыртнипе е сăхнипе, электричество токĕ çапнипе, пиçсе кайнипе, радиаципе сиенленнипе сăлтав-ланнă тата пурнăçпа сывлăхшăн хăрушлăх кăларса тăртакан ытти лару-тăрăва палăртасси.

6. Сурансен характерне кура пĕрремĕш пулăшу парасси.

7. Инкеке лекнĕ çынна тухтăр çырса панă эмелсене ĕçме пулăшасси.

8. Канлĕ вырнаçтарса вырттарасси.

**Тăн çухатнă:**

4. Чĕрепе ÿпке реанимацийĕ ирттересси. Пÿлĕннĕ сывлăш çулĕсене тасатасси, уçăлма пулăшасси.

9. Васкавлă пулăшу чĕнсе илесси. Лару-тăрăва сăнаса тăр, психологи пулăшăвĕ парасси. Инкеке лекнĕ çынна васкавлă пулăшу ушкăнĕ, медицина организацийĕсем, пĕрремĕш пулăшу паракан ятарлă службăсем патне илсе çитерме пулăшасси.

# Аманнисене пĕр-пĕр инкек пулнă вырăнта пулăшмалли ĕçсен пĕтĕмĕшле йĕрки:



1. Сирĕншĕн тата инкеке лекнĕ çыншăн нимĕнле хăрушлăх та çуккине пăхса ĕненĕр. Медицина перчаткипе, маскăпа усă курăр. Аманнисен шутне палăртăр, вĕсене пĕрремĕш пулăшу пама хатĕрри çинчен пĕлтерĕр. Сывлăш çулĕсене урăх япала лексен ăна кăларма пулăшăр.



2. Инкеке лекнĕ çыннăн ӳт çинчи сурансене тĕрĕслĕр. Юн тухнине асăрхасан ăна чарма тăрăшăр (18-мĕш стр-ра к~тартса панă).

3. Çын сывланипе сывламаннине, тăна кĕнине палăртăр. Унтан 5-мĕш пунктран малалла сĕннĕ пунктсене пурнăçлăр.




4.1. Çын тăн çухатсан, сывлама чарăнсан, юн çаврăнăшĕ çук пулсан (хăвăр тĕллĕн е урăх çын пулăшнипе) 103 е 112 номерпе васкавлĕ пулĕшу чĕнсе илĕр.




Чĕрепе ӳпке реанимацине ирттерĕр: черетлесе пырса малтан 30 хут кăкăр çине пусăр, унтан 2 хут ӳпкене сывлăш кĕртĕр.

**Май пулсан дефибрилляторпа усă курăр (26-мĕш стр-ра кăтартса панă).**



4.2. Пурнăç паллисем пур, анчах тăн çухатнă çынна аяк çине вырттарăр е пуçне хыçала тайăлтарса янах шăммине çӳлелле йăтăр.



5. Инкеке лекнĕ çынна пĕтĕмĕшле тĕрĕслесе тухăр тата вăл хăйне мĕнле туйнине (тăна кĕрсен) ыйтса пĕлĕр Суранланланнипе, ăш-чике наркăмаш лекнипе, тискер чĕр чун çыртнипе е сăхнипе, электричество токĕ çапнипе, пиçсе кайнипе, радиаципе сиенленнипе сăлтавланнă тата пурнăçпа сывлăхшăн хăрушлăх кăларса тăртакан ытти лару-тăрăва палăртăр.

6. Суранланнă вырăна тупса пĕрремĕш пулăшу парăр.




7. Инкеке лекнĕ çынна тухтăр çырса панă эмелсене ĕçме пулăшăр.



8. Инкеке лекнӗ ҫыннӑн суранӗсемпе туйӑмне кура канлӗ вырнаҫтарса выртар.



9. Васкавлӑ пулӑшу чӗнсе илӗр. Лару-тӑрӑва сӑнаса тӑрӑр, психологи пулӑшӑвӗ парӑр. Инкеке лекнӗ ҫынна васкавлӑ пулӑшу ушкӑнӗ патне илсе ҫитерӗр, ыйтусем ҫине хуравлӑр, кирлӗ пулсан пулӑшупа тивӗҫтерӗр.

## 1. Лару-тӑрӑва хак парасси тата пурнӑҫа хӑрушлӑх кӑларса тӑратакан факторсене сиресси. Аманнӑ ҫынна куҫарасси.



**Тавралӑха сӑнӑр. Хӑвӑршӑн тата инкеке лекнӗ ҫыншӑн хӑрушлӑх ҫуккине тӗрӗслӗр. Май пулсан инкек тӳсекене хӑрушсӑр вырӑна куҫарӑр. Аманнӑ ҫынна турттармалли меслетсенчен пӗринпе усӑ курӑр.**

## 1.1. Инкеке лекнĕ çынна автомашинăран е çитме йывăр вырăнтан илсе тухасси.



**Чи малтанах эсир хăрушсăрлăхра пулнине тĕрĕслĕр!**

**Инкеке лекнĕ çынна машинăран е çитме йывăр вырăнтан хăçан кăлармалла:**

- унăн пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн хăрушлăх пур пулсан;
- енчен те инкеке лекнĕ çынна палăртнă условисенче пĕрремĕш пулăшу пама май килмесен.



Алăпа măйран тытмасăр туртса кăларасси:

- инкеке лекнĕ çынна шăлавар ременĕнчен е пиççихинчен тытăнса çурăмпа хăвăр еннелле майĕпен çавăрăр;
- алăсемпе хул айĕнчен чиксе инкеке лекнĕ çыннăн алă хул кăкĕнчен ярса тытăр;
- инкеке çынна туртса кăларăр.



Măйран тытса туртса кăларасси:

- çӳлте çырса кăтартнă меслетсене пурнăçлăр;
- çав вăхăтрах хуçлатнă чавсаран тытăнса çыннăн янахне алăпа çирĕплетĕр, пуçне хавăрăн кукăр çумне чăмăртăр;
- инкеке лекнĕ çынна туртса кăларăр.

Инкеке лекнĕ çынна хăрушсăр вырăна илсе тухăр.



**Мăй шăмми аманнă пулсан, пуçпа мăя хускатмалла мар.**

## 1.2. Инкеке лекнĕ çынна илсе тухмалли правилăсем.



Пусма тăрăх хăпарнă чухне (машинăна ăшне кĕртнĕ чухне) инкеке лекнĕ çынна пуçĕпе мала йăтса кĕмелле.



Пусма тăрăх аннă чухне (транспортран кăларнă чухне) инкеке лекнĕ çынна урисене мала йăтса тухмалла.



Юн нумай çухатнă çынна йăтнă чухне унăн урисем пуçĕнчен çӳлерех пулмалла.



Инкеке лекнĕ çынна малта йăтса пыраканăн ура айне тимлĕн пăхса пымалла, хыçалта утакана пур чăрмав çинчен те пĕлтермелле. Инкеке лекнĕ çынна хыçалтан йăтса пыракан çыннăн унăн сывлăхне сăнаса тăмалла. Кирлĕ самантсенче «Чарăн! Хăсать! е «Чарăн! Тăн çухатрĕ!» команда памалла.

**ИНКЕКЕ ЛЕКНĔ ÇЫННА ЙĂТНĂ ЧУХНЕ ПĔР ТАН УТМА ТĂРĂШМАЛЛА МАР!**

**Сурансен уйрӑмлӑхне, сывлӑхне, ҫынна турттарассинче хутшӑнакансен шутне тата вӗсен вӑй-хал майӗсене кура инкеке лекнӗ ҫынна транспорта е хӑрушсӑр вырӑна тӗрлӗ майпа йӑтса ҫитерме пулать.**



а. Инкеке лекнӗ ҫынна хулран тытса пӗччен куҫарасси. Тӑн ҫухатман ҫӑмӑл суранланнӑ ҫынсене пулӑшма усӑ кураҫҫӗ.



б. Инкеке лекнӗ ҫынна ҫӗр ҫийӗпе сӗтӗрсе ҫитерesси. Ку меслетпе самӑртарах ҫынсене ҫывӑхри вырӑна куҫарма усӑ кураҫҫӗ. Анчах ал-ура хуҫнӑ ҫынсене ку меслетпе куҫарма сӗнмеҫҫӗ.



в. Инкеке лекнӗ ҫынна ҫурӑм ҫинче йӑтса ҫитересси. Ку меслтетпе хытканрах ҫынсене йӑтма усӑ курма пулать. Анчах тӑн ҫухатнӑ ҫынсене ку меслетпе йӑтма сӗнмеҫҫӗ.



г. Инкеке лекнӗ ҫынна алӑ ҫинче йӑтса ҫитересси. Ҫак меслетпе ҫителӗклӗ вӑй-халлӑ ҫынсем усӑ курма пултараҫҫӗ. Ку меслетпех тӑн ҫухатнӑ ҫынсене те йӑтса ҫитерме пулать. Ҫурӑм шӑммине амантнӑ ҫынсене кун пек майпа турттарма сӗнмеҫҫӗ.



д. Инкеке лекнĕ çынна хулпуççи çинче пĕччен йăтса çитересси.

Инкеке лекнĕ çыннăн аллинчен тытса пымалла. Ку меслетпе кăкăра, хырăма тата çурăм шăммине амантнă çынна йăтнă чухне усă курма сĕнмеççĕ.



е. Инкеке лекнĕ çынна иккĕн алăсене пĕр-пĕринпе хĕресле тытса йăтса çитересси. Пĕр-пĕрне ал сыпписенчен тытмалла. Инкеке лекнĕ çынна йăтнă чухне алăсене çирĕп тытмалла.



ж. Хĕресле тытнă алăсем çине инкек лекнĕ çынна лартмалла, ун хыççăн ăна çĕклесе алăсем çинче илсе çитермелле. Инкеке лекнĕ çын ăна йăтакансен хулпуççийĕсенчен тытăнса пырать.



з. Иккĕн висĕ алăпа хĕресле, тăваттăмăшĕпе çурăмран тытса пырса инкеке лекнĕ çынна йăтса çитересси. Çак меслетпе усă курнă чухне пĕрремĕш пулăшу паракансенчен пĕри пĕр аллине çаклатмасть, ăна теприн хулпуççи çине хурать. Инкеке лекнĕ çын хăйне йăтса пынă чухне çак алă çине таянма пултарать. Çак майпа инкеке лекнĕ çын тăн çухатма пултарсан е алăсене хĕресле тытнă чухне ӳкме пултарсан усă кураççĕ.



и. Инкеке лекнĕ çынна иккĕн алăпа урараан тытса йăтса çитересси. Пĕрремĕш пулăшу паракансенчен пĕри инкеке лекнĕ çынна хул айĕпе, тепри чĕркуççи айĕнчен тытса йăтса пырать.



к. Çурăм шăммине амантнă çынна йăтса çитересси. Кун чухне пулăшма темиçе çын кирлĕ.
Пĕри ертсе пынипе теприсем инкеке лекнĕ çынна çĕклесе илсе çитереççĕ. Пулăшакансенчен пĕри йăтса пынă чухне инкеке лекнĕ çыннăн пуçĕпе мăйĕнчен тытса пымалла. Çурăм шăммине амантнă çынна хытă, тикĕс çи çинче (сăмахран, щит çинче) йăтсан меллĕрех тата хăрушсăртарах пулĕ.

## 2. Инкеке лекнĕ çынна пĕтĕмĕшле тĕреслесси. Юн юхсан пĕрремĕш пулăшу парасси.



Сирĕншĕн тата инкеке лекнĕ çыншăн нимĕнле хăрушлăх та çуккине палăртăр. Биологи шĕвекĕсенчен хӳтĕленме медицина перчаткипе, маскăпа усă курăр.

Кирлĕ пулсан шар курнă çынна урăх çĕре куçарăр.



Ӳт ҫинчи сурансенчен юн юхнипе юхманнине хӑвӑрт (1–2 ҫеккунт хушшинче) тӗрӗслӗр.

Чи вырӑнлӑ меслетпе усӑ курса юн юхнине чарӑр.

## Юн юхнине вӑхӑтлӑха чармалли майсем:



1. Суран ҫине хытӑ пусӑр.



2. Сурана ҫыхӑр. Суранне темиҫе хут хутлатнӑ салфеткӑпа е темиҫе сийлӗ ҫирӗп бинтпа хуплӑр. Ҫиелтен бинтпа ҫыхӑр. Бинт йӗпенсен ун ҫине тата темиҫе ҫирӗп чӗркенӗ салфетка хурӑр, ал тупанӗпе хытӑ пусӑр.



Суранланнă вырăнта урăх япала кăнтарса тăрать пулсан, бинта «валик» евĕр ун тавра çавăрттармалла, пластырьпе çыпăстармалла е пусмапа çыхмалла.

**СУРАНРАН ЮТ ЯПАЛАСЕНЕ ИНКЕК ВЫРĂНĔНЧЕ АН КĂЛАРĂР**

Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.



Юн юхнине чарма пулăшакан жгут хурăр.

**Жгута ал-урараран юн тухсан, ăна чарма урăхла май çук чухне хумалла!**

Жгута (жгут-турникет вăл шута кĕмест) суранран кăшт çӳлерех (5-7 см аяккарах) япала е çемçе сий çине хумалла.



Жгута алă айĕпе çавăрса тăсăр. Пĕрре çавăртарса çирĕплетĕр, суранран юн кайма чарăннине тĕрĕслĕр.

Жгута сахалтарах вăйпа тата темиçе хут çавăрăр, кашни çаврăма çурринчен çирĕплетсе тытăр.





Жгут айне çыру хурăр, унта ăна хăçан хунине тата вăхăтне çырса пĕлтерĕр. Жгута бинтпа е тумтирпе ан хуплăр.



Жгут хунă хыççăн аманнă ал-урана хускатмалла мар, ăшă тумтирпе е утиялпа чĕркемелле.

Жгута çыхмалли хăрушсăрлăх вăхăчĕ — çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те 2 сехет. Çак вăхăт иртсен жгута ятарлă медицина учрежденийĕнче кăна салтма пултараççĕ.



## ЖГУТА УРА ТУНИПЕ ХУЛ КĂКĔ ÇИНЕ ХУМАЛЛА!



## ЖГУТА СЫПĂСЕМ, ХУЛПУÇÇИН ВĂТАМ ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ ТАТА ПĔÇĔН АЯЛТИ ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ ÇИНЕ ÇЫХМАÇÇĔ!

# Енчен те васкавлӑ пулӑшу жгут хунӑ хыҫҫӑн 2 сехетрен иртсен ҫитмесен, ҫакна тӑвӑр:



1. Суран ҫине хытӑ пусмалла.
2. Жгута 15 минутлӑха пушатмалла.
3. Май пур пулсан, ал-урана массаж тумалла.
4. Жгута унччченхи вырӑнтан кӑшт ҫӳлерех ҫыхмалла.

## Юн юхма пуҫласан тата суран ҫине пусни те пулӑшмасан – жгута хытӑрах ҫыхмалла!

Енчен те юн нумай ҫухатнӑ пулсан, инкеке лекнӗ ҫынна ҫӗре вырттармалла, урисене ҫӳлелле ҫӗклемелле.

## Жгут-турникета ҫыхасси:



Лентӑна ҫыхӑ витӗр кӑларӑр та ал-ура тавра ҫыхӑр.

Липучка ҫирӗплетӗр.

Жгутӑн ҫухавне (рычагне) юн тухма чарӑниччен ҫавӑрӑр.

Ҫухава ҫирӗплетмелли шӑтӑка (е ҫырса панӑ инструкци тӑрӑх) кӗртсе ярӑр.

## Енчен те сирӗн табель турник çук пулсан, жгут-закруткăпа усă курăр:



Жгут-закруткăна ал айӗнчи материалтан (пиртен, тутăртан), тумтир айӗнчен е ӳт çине пир хурса ал-ура тавра суранран çӳлерех çыхăр. Вӗçӗсене йăлмак туса çыхăр.



Йăлмак ăшне патак (е çавăн пек ытти япала) чиксе хурăр.
Патака çавăрнă май жгут-закруткăна юн кайма чарăниччен хытă туртăнтарăр.
Патак ан вӗçерӗнтӗр тесен ăна хытăрах çирӗплетӗр.
Жгут-закруткăпа тата табель жгутпа суран çыхмалли правилăсем пӗр пекех.

## 3. Тăн çухатнипе çухатманнине тӗрӗслемелли меслет.



Инкеке лекнӗ çынна хулпуççинчен хуллен силлесе пăхăр та ыйтса пӗлӗр: «Сирӗнпе мӗн пулнă? Пулăшу кирлӗ-и?».



Сывлăш çулне уçăр. Çакна тума пĕр алла çамка çине хумалла, тепĕр аллăн икĕ пӳрнипе янаха çĕклесе пуçа каялла ывăтмалла. Пит çăмартипе тата хăлхапа сыннăн çăварĕпе сăмси патне тайăлăр. Вăл мĕнле сывланине итлĕр, кăкăр хусканăвĕсем пуррипе çуккине палăртăр (10 çеккунт хушшинче).




Çын сывламаннине туйсан, пулăшуçăна васкавлă медицина пулăшăвне чĕнме хушăр: «Çын сывламасть. Васкавлă пулăшу чĕнĕр, унтан мана пĕлтерĕр».

# 4. Чĕрепе ӳпке реанимацийĕирттересси.

## 4.1. Кăкăр çине пусмалли правилăсем.



### ХЫТĂ ТИКĔС ÇĔР ÇИНЧЕ КĂНА ПУРНĂÇЛАМАЛЛА!

Алă тупанне кăкăр кăшкарĕ варрине хурăр. Тепĕр алăна ун çине хурса пӳрнесене пĕр-пĕринпе çаклатăр.



Алăсене чавса сыпписем патĕнче тӳрлетĕр, хулпуççисен кăкăртан пуснă чухне перпендикулярлă пулмалла.




Пĕтĕм ӳт-пĕвĕн йывăрăшĕпе усă курса çыннăн кăкăр шăмми çине алăпа 5-6 см тарăнăш, 100-120 минут тăтăшлăхпа пусмалла.



Çулталăкран кĕçĕнрех ачасене кăкăр шăммине икĕ пӳрнепе пусаççĕ.
Аслăраххисене — пĕр е икĕ алăпа.

## 4.2. Ирĕксĕрлесе сывлăш çавăрса пулăшмалли меслетсен йĕрки.



Инкеке лекнĕ çыннăн пуçне хыçалалла ывăтмалла, пĕр аллине çамки çине хумалла, тепĕр аллăн икĕ пӳрнипе янах шăммине çĕклемелле.

Инкеке лекнĕ çыннăн сăмсине икĕ пӳрнепе хупламалла. Хăвăр сывласа илĕр, шар курнă çыннăн çăварне хăвăрăн тутупа хыпăр, унăн сывлав органĕсене 1 çеккунт хушши тикĕссĕн сывлăр, кăкăр кăшкарĕ мĕнле çĕкленнине сăнăр. 2 хутчен сывлăш кĕртнĕ чухне 10 çеккунтран кая мар иртмелле.




**Асăрхаттару: çак мероприятине ирттернĕ чухне аптечкăри «çăвар-хатĕр-çăвар» искусственнăй сывлав хатĕрĕпе усă курма сĕнеççĕ.**

Кăкăр кăшкарĕ çине 30 хутчен пусса 2 хутчен сывлăш (реанимаци тăвакан çынсен шутне пăхмасăрах) кĕртмелле.

## 4.3. Хăй халлĕн ĕçлекен дефибриляторпа усă курасси.



Май пур пулсан, дефибрилляторпа усă курăр! Унпа тӳрех (чĕре таппи чарăннă самантра) е 3–5 минутран усă курма юрать.



Ҫакна тума:

– Пулăшакана дефибриллятор илсе килме ыйтăр.

– Чĕрепе ӳпке реанимацине тума пуҫлăр: черетлесе 30 хутчен кăкăр ҫине пусăр, 2 хутчен сывлăш кĕртĕр;

– Дефибриллятор илсе килсен ăна ҫутăр та инструкцие пăхăнăр;

– электродсене кăкăр ҫине ҫирĕплетĕр.



**Асăрхаттару: енчен те пулăшăва икĕ е ытларах ҫын парать пулсан, электродсене ҫирĕплетнĕ вăхăтра чĕрепе ӳпке реанимацине малалла ирттермелле.**

Инкеке лекнĕ ҫынна никам та тĕкĕнменнине кура заряд пама кнопка ҫине пусăр!

– Ҫакăн хыҫҫăн чĕрепе ӳпке реанимацине малалла тăвăр;

– Инкеке лекнĕ ҫынна черетлесе дефибрилляторпа чĕрепе ӳпке реанимацине ирттерсе малалла пĕрремĕш пулăшу парăр.



## Чĕрепе ӳпке реанимацине тума чарăнмалли сăлтавсем:




васкавлă медицина пулăшăвĕн бригадисем е ятарлă службăсем ҫитсен;

инкеке лекнĕ ҫыннăн пурнăҫ паллисем палăрсан;

чĕрепе ӳпке реанимацине ирттернĕ вăхăтра вăй пĕтсе ҫитсен (пулăшакана илĕртмелле);

пĕрремĕш пулăшу паракан ҫын умĕнче хăрушлăх пур пулсан.

## 4.4. Сывлăш çулĕсенче урăх япала кĕрсе ларнипе çын сывлаймасан пĕрремĕш пулăшу парасси:



**АСЛИСЕН**

Инкек лекнĕ çын хыçне тăрăр, ăна малалла чалăштарăр, алă тупанĕпе 5 хут хул кулакĕсем хушшинчен çапăр. Çапнă хыççăн кашнинчех сывлăш çулĕсем уçалнипе уçалманнине тĕрĕслĕр.



Кĕрсе ларнă япала тухмасан çынна алăсемпе хырăмăн çулти пайĕнчен ыталаса илĕр. Пĕр алă çинчи чышкăна хуçлат та ăна кăвапаран çӳлерех хурса хăвăр еннелле пуç пӳрнипе кăтартмалла тăвăр. Тепĕр алăна чышкăна хуçлатса хырăмĕнчен хăвăрт шалалла та çӳлелле направленипе пусăр. Çакна 5 хутчен ирттерĕр.



**АЧА КĔТЕКЕН ХĔРАРĂМСЕНЕ, САМĂР ÇЫНСЕНЕ ХЫРĂМРАН ПУСМА ЮРАМАСТЬ!)**

Хул кулакĕнчен çапăр, унтан кăкăрăн аялти пайĕнчен пусăр.

## АЧАСЕН



Паллăсем: ача чыхăнать, калаçаймасть, сасартăк кăвакарма тытăнать, тăнне çухатма пултарать.
Ачана алă çине пуçĕпе аялалла хурăр, пуçне тытса тăрăр, унтан хул калакĕнчен 5 хутчен çапăр.
Ку пулăшмасть пулсан, икĕ пӳрнепе кăкăрăн аялти пайĕнчен 5 хутчен пусăр. Çакна сывлăш çулĕсенче кĕрсе ларнă япала тухиччен пурнăçлăр!

Енчен те çын тăнне çухатнă пулсан, чĕрепе ӳпке реанимаци тăвăр. Çав вăхăтрах çăварта кĕрсе ларнă япала тухма пулма пултарассине сăнаса тăрăр, ăна асăрхасан кăларса пăрахăр .






Çын çамăлăн сывлама пуçласан ăна аяк çине вырттарăр. Васкавлă пулăшу машини çитиччен çын мĕнле сывланине тăтăшах сăнаса тăрăр!

# 5. Проведение подробного осмотра и опроса пострадавшего.

Инкеке лекнĕ çынна тĕплĕн тĕрĕслесе унăн суранланнă, ăш–чике наркăмаш лекнĕ, тискер чĕр чун çыртнă е сăхнă, электричество токĕ çапнă, пиçсе кайнă, радиаципе сиенленнĕ тата ытти паллăсем пуррипе çуккине тупса палăртни.

**Инкеке лекнĕ çынна тĕрĕсленĕ чухне асăрханупллă пулăр!**




Пуç синче
сурансем пуррипе
çуккине пăхăр.




Кăкăрпа çурăма
тĕрĕслĕр




Хырăмпа
купарча
тĕлĕнче
сурансем
пуррипе
çуккине пăхăр.







Мăйне тĕрĕслĕр.





Инкеке лекнĕ ҫыннăн аллисене пăхса тухăр.



Урисене тĕплĕн тĕрĕслĕр. Пурнăҫшăн тата сывлăхшăн хăрушă сурансем тупсан пĕрремĕш пулăшу парăр.

**Ӳт ҫинче пурнăҫшăн тата сывлăхшăн хăрушă сурансем чухне пĕрремĕш пулăшу памалла мероприятисем.**

# 6. Суранланлансан, радиаципе сиенленсен, температура хăпарсан, хими япалисемпе наркăмăшлансан, тискер чĕр чун ҫыртсан е сăхсан пĕрремĕш пулăшу парасси.

## 6.1. Суранлансан пĕрремĕш пулăшу.

### 6.1.1. Пуҫ амансан.



Юн юхма чарăнтăр тесен сурана пусма татăкĕпе хытă пусăр.

Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.

Ҫын тăн ҫухатнипе ҫухатманнине тата сывланине сăнаса тăрăр.




Пурнăç паллисем палăрмасан чĕрепе ÿпке реанимацине тума пуçламалла.

Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă пулăшу чĕнĕр.

Хăй тĕллĕн сывлама пуçличчен е медицина ĕçченĕсем çитиччен чĕрепе ÿпке реанимаци ирттерĕр.



Сывлама пуçласан (е унччен те сывланă пулсан) çынна аяк çине выртмалла тăвăр. Васкавлă медицина пулăшăвĕ çитиччен çын мĕнле сывланине тĕрĕслесе тăрăр.

## 6.1.2. Куçпа куç хупанкисем суранлансан.



Куç тата куç хупанки суранлансан икĕ куçа та çыхмалла (икĕ куçне те çыхăпа хупламасан, сывă куç хускаланипе пушшех ыратма тытăнать)

Васкавлă пулăшу чĕнĕр!

**Инкеке лекнĕ çыннăн хăйпе пĕрле пыраканăн аллинчен тытăнса утмалла!**



## 6.1.3. Сăмсаран юн кайсан.



Сăмсаран юн тухать пулсан ҫынна тӳре ларăн ҫине лартăр, пуҫне кăштах малалла чалăштармалла. Сăмса ҫуначĕсене 15–20 минут хушши пăчăртамалла. Ҫав вăхăтра ҫыннăн ҫăварпа ҫывламалла!



Сăмса кăке ҫине сивĕ (йĕпе тутăр, юр, пăр) хумалла.



Инкеке лекнĕ ҫынна юна сурса кăларма сĕнĕр (юн хырăма кĕрсен ҫын хăсма пултарать). Юн 15–20 минут хушшинче чарăнмасан васкавлă пулăшу чĕнмелле.

## 6.1.4. Мăй амансан.



Юн юхма чарăнтăр тесен сурана пусма татăкĕпе хытă пусăр.



Ĕнсе шăмми аманнă чухне (çул çинчи инкеке лексен, çӳлтен ӳксен, шыва чăмнă чухне ыраттарсан), инкеке лекнĕ çынна куçармалла пулсан, унăн пуçне тата мăйне хул кăкĕпе тытса пымалла. Инкеке лекнĕ çынна васкавлăн кăларнă чухне унăн мăйне алăпа çирĕплетсе тытăр.
Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă пулăшу чĕнĕр.

## 6.1.5. Кăкăр кăшкарĕ амансан.



Паллăсем: кăкăр çинчи суран вырăнĕнчен юн кайнă чухне (суран витĕр сывлăш тухса тăрать пек) хăмпăсем палăраççĕ.

Енчен те суранланнă вырăнта урăх япала кăнтарса тăмасть пулсан алă тупанĕпе ăна пусса тăрар, сывлăша тухма ан парăр. Витĕр тухнă сурана ик енчен те хуплама тăрăшмалла.



Суран вырăнне сывлăш кĕмелле мар япалапа хупламалла, унтан бинтпа çыхмалла .



Инкеке лекнĕ çынна суранланнă вырăн еннелле тайăнтарса лартăр.



Суранланнă вырăнта урăх япала кăнтарса тăрать пулсан, бинта «валик» евĕр ун тавра çавăрттармалла.

**Суранран ют япаласене инкек вырăнĕнче ан кăларăр!**

Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.

## 6.1.6. Вар-хырăм амансан.



Юн юхма чарăнтăр тесен сурана пусма татăкĕпе хытă пусăр.

**Ăш-чикрен тухса ӳкнĕ шалти органсене каялла вырнаçтарса хума юрамасть, сурана бинтпа хытă çыхмалла, ӳт çине тăрăннă япалана туртса кăлармалла.**



Хырăм аманнипе шалти органсем тухса ӳксен бинтран тунă валик хумалла.



Валик çине шывпа йĕпетнĕ бинт е таса пир хумалла. Ăш-чикрен тухса ӳкнĕ шалти органсене хытă пусмасăр хырăм çине бинт çыхмалла.




Хырăм шалтан суранланнă пулсан (вар-хырăм çинче нимĕнле суран та курăнмасан) ун çине сивĕ хумалла, инкеке лекнĕ çынна çурăмĕ çине выртттармалла, урасене пĕрлештерсе хуçлатмалла, айне валик хумалла.



Инкеке лекнĕ çынна шăнма ан парăр. Ăшă утиялпа тата тумтирпе чĕркемелле.

Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.

**Хырăм суранланнă чухне инкеке лекнĕ çыннăн ĕçме-çиме юрамасть!**

## 6.1.7. Алă-ура хуçăлсан.



Сире тата инкеке лекнĕ çынна нимĕнле хăрушлăх та тивменнине сăнăр. Медицина перчеткисемпе усă курăр. Кирлĕ пулсан инкеке лекнĕ çынна вырăнтан куçарăр.



Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.
Юн юхнине чарăр.



Енчен те эсир инкеке лекнӗ çынна хӑвӑр тӗллӗн илсе çитерме шухӑшлатӑр пулсан, шӑмӑ хуçӑлнӑ вырӑна шинӑпа е алӑ айӗнчи хатӗрсемпе усӑ курса хускалмалла мар çыхмалла.



## Юнашар сыпӑсене (хуçӑлнӑ вырӑнтан çӳлте тата аялта вырнаçнисене) хускалмалла мар çыхмалла.



Шинӑпа е лаптӑклӑ ансӑр япаласемпе усӑ курма пулать: патаксем, хӑмасем, линейкӑсем, хулӑсем, фанера, картон тата ытти те. Ал айӗнчи хатӗрсемпе ӑсталанӑ шинӑн çивӗч кӗтесӗсене бинтпа чӗркемелле. Унтан ӑна ал-ура хуçалнӑ вырӑна хурса тепӗр хут бинтпа е пластырьпе çыхса çирӗплетмелле. Ал-ура хуçӑлнӑ чухне шинӑна тумтирпе пушмак çине хумалла.



Уçӑ суран чухне шӑмӑ ванчӑкӗсем тухса тӑракан вырӑнсене шина хума юрамасть.



Алă-ура тăршшĕпе шина хурса бинтпа çирĕп çыхмалла (хуçалнă вырăна шута илмелле мар), анчах юн çаврăнăшĕ ан пăсăлтăр тесен ытлашши хытă çыхмалла мар. Ура хуçăлсан ăна икĕ енчен те шинăпа çыхса хумалла.



Шина е ал айĕнче япала та çук пулсан аманнă урана сывă ура çумне, алăна кĕлетке çумне бинтпа çыхса хумалла.



Инкеке лекнĕ çынна шăнма памалла мар, ăшă пылак чей ĕçтермелле.

# 6.2. Наркăмăшлансан пĕрремĕш пулăшу.

## 6.2.1. Çăвар урлă наркăмăшлансан.




Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр. Мĕн пулса иртнине пĕлĕр (эмелпе наркăмăшланнă пулсан эмел упаковкине медицина ĕçченне кăтартмалла).
Инкеке лекнĕ çын тăна кĕнĕ пулсан 5–6 стакан шыв ĕçтерĕр
икĕ пӳрнепе чĕлхе тымарĕ çине пусса хăстармалла. Хăснă хыççăн тепĕр хут шывпа çăвара çӳхемелле.
Хырăмлăха çуса тасатма пĕтĕмĕшле 2,5–5 литр шыв ĕçмелле.



**ÇЫН ТĂН ÇУХАТНĂ ПУЛСАН ХЫРĂМА ТАСАТМАЛЛА МАР!**
Енчен те инкеке лекнĕ çын тăн çухатнă пулсан, вăл сывлать е çук, юн çаврăнăшĕ пур е çук — палăртăр!





Пурнăç паллисем палăрмасан чĕрепе ӳпке реанимацине тума пуçламалла. (24-мĕш страницăра пăхăр).

Хăй тĕллĕн сывлама пуçличчен е медицина ĕçченĕсем çитиччен чĕрепе ӳпке реанимаци irrтерĕр!



Çын çамăлăн сывлама пуçласан ăна аяк çине выртарăр. Васкавлă пулăшу машини çитиччен çын мĕнле сывланине тăтăшах сăнаса тăрăр.

Инкеке лекнĕ çынна ăшă утиялпа тата тумтирпе чĕркемелле.

## 6.2.2. Сывлав çулĕсем урлă наркăмăшлă япаласем лексен.



Сирĕншĕн тата инкеке лекнĕ çыншăн нимĕнле хăрушлăх та çуккине палăртăр, инкеке лекнĕ çынна хăрушсăр вырăна илсе тухмалла е чӳречесене уçса пӳлĕме уçăлтармалла.

**Сĕрĕм газĕпе наркăмăшланнин паллисем: куç чиксе ыратни, хăлха янăрани, пуç ыратни, хăсни, тăн çухатни, ӳт хĕрелни.**

**Кил-çуртра усă куракан газпа наркăмăшланнин паллисем: пуç йывăрланни, пуç çаврăнни, хăлхара шăв-шав илтĕнни, хăсни, вăй пĕтни, чĕре хăвăрт тапни, ыйхă килни, тăн çухатни, ирĕксĕр шăк тухни, ӳт кăвакарни, аран сывлани, шăнăр туртни.**




Пурнăç паллисем палăрмасан чĕрепе ӳпке реанимацине тума пуçламалла.

Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.



Хăй тĕллĕн сывлама пуçличчен е медицина ĕçченĕсем çитиччен чĕрепе ӳпке реанимаци ирттерĕр.

Сывлама пуçласан (е унччен те сывланă пулсан) çынна аяк çине вырттарăр. Васкавлă медицина пулăшăвĕ çитиччен çын мĕнле сывланине тĕрĕслесе тăрăр.

## 6.2.3. Куçа амантсан.



Куçа хими япалисемпе пĕçертсен е куçа мĕн те пулин кĕрсе кайсан асăрханса çыннăн куç хупанкисене пӳрнесемпе сармалла, куçа таса шывпа çуса тасатмалла (пӳлĕмри температури шыв пулсан аванрах). Куç çине нумай шыв юхтарса çуса тасатмалла. Шывăн сăмсаран тăнлав патне юхса анмалла.



Икĕ куçне те бинтпа çыхăр (икĕ куçне те çыхăпа хупламасан, сывă куç хускаланипе пушшех ыратма тытăнать).

Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.



Инкеке лекнĕ çыннăн хăйпе пĕрле пыраканăн аллинчен тытăнса утмалла!

## 6.3. Ӳт пиçсе кайсан.



Сирĕншĕн нимĕнле хăрушлăх та çуккине палăртăр. Инкеке лекнĕ çынна чарăр та çĕр çине вырттарăр.



Çунакан тумтире кирек мĕнле мелпе сӳнтермелле (сăмахран, çынна çунман пирпе витĕр).



Пиçсе кайнă вырăна 20 минут хушши сивĕ шывпа йĕпетсе тăмалла.




Хăмпăсене шăтармалла мар, суран çинчен çыпăçнă япаласене, тумтире уйăрмалла мар! Пиçсе кайнă вырăна стерильлĕ бинтпа çыхмалла та çиелтен сивĕ япала хумалла. Шыв нумай ĕçтермелле.




Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр!

## 6.4. Хĕвел ăшшипе (шăрăхпа) анрасан.



Хĕвел ăшшипе (шăрăхпа) анрасан (температура хăпарнă, ӳт-пӳ, сăн-пит тарласа шурса кайни, пуç ыратни, хăсас килни, пуç çаврăнни, вăйсăрланни, тăн çухатни, шăнăр туртни, чĕре хăвăрт тапни тата хăвăрт сывлани) инкеке лекнĕ çынна сулхăн, сывлăш кĕрекен вырăна (сулхăн вырăна, уçă чӳрече патне) куçарса çитермелле.




Пурнăç паллисем палăрмасан чĕрепе ӳпке реанимацине тума пуçламалла. Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.
Хăй тĕллĕн сывлама пуçличчен е медицина ĕçченĕсем çитиччен чĕрепе ӳпке реанимаци ирттерĕр.



Сывлама пуçласан (е унччен те сывланă пулсан) çынна аяк çине вырттарăр. Васкавлă медицина пулăшăвĕ çитиччен çын мĕнле сывланине тĕрĕслесе тăрăр.



Сивӗ шывпа йӗпетнӗ ал шӑллине (салфеткӑна) пуҫпа мӑй ҫине хумалла.



Шӑнӑр туртнӑ чухне инкеке лекнӗ ҫыннӑн пуҫӗпе кӗлеткине суранланасран тытса тӑмалла (анчах пусмалла мар).




Тӑна кӗрсен инкеке лекнӗ ҫынна лӗпе шыв ӗҫтермелле.

## 6.5. Тăм илсен.



Инкеке лекнĕ çынна ăшă çĕре илсе кĕрĕр.



Сиенленнĕ алă-урапа ӳт лаптăкĕсене ăшă материалпа (ватăпа, утиялпа, тумтирпе) витĕр. «Шал енчен» ăшăтса юн çаврăнăшне çĕнĕрен чĕртсе ямалла.



**Пиçсе кайнă лаптăксене ăшăтас тесе ытлашши тăрăшмалла мар (сăмахран, вĕри шыва ямалла мар), сăтăрма, йăвалама, мĕнпе те пулин сĕрме юрамасть!**

Суранланнă çынна утиялпа чĕркемелле, кирлĕ пулсан типĕ тумтир тăхăнтартмалла. Вĕри тата пылак чей хатĕрлесе парăр. Вĕри апат çитерĕр.



**Эрехпе усă курма юрамасть!**

Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.

## 6.6. Шăнса пăсăлсан.



Инкеке лекнĕ çынна ăшă çĕре илсе кĕмелле е утиялпа, çăланăç виткĕчĕпе, тумтирпе витсе ăшăтмалла.
Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.



Инкеке лекнĕ çын тăна кĕрсен вĕри тата пылак чей хатĕрлесе парăр.Вĕри апат çитерĕр.
**Эрехпе усă курма юрамасть!**

## 6.7. Электричество токĕ çапсан.



Васкавлă оперативлă службӑна 112 номерпе шăнкăравлăр. Хăвăрăн хăрушсăрлăхăра тивĕçтерĕр. Электричество токĕ çапнипе инкек курнă çынна тӳрех ан тĕкĕнĕр.

Май пур пулсан, ток çăлкуçне сӳнтерĕр – килте электричествăпа усă куратăр пулсан, çакна хăвăр тĕллен тума пултаратăр: сӳнтеркĕçпе е электросчетчикри автоматла сӳнтерекен хатĕрпе усă курма пулать.

Производствăра е пысăк вольтлă электричество сетĕсенчен токпа çапсан аварипе çăлав формированийĕсем килессе кĕтмелле. Çĕр çийĕн инкек курнă çын патне çывхарнă чухне пĕчĕк утăмсемпе утăр. Инкеке лекнĕ çын çинчен пăралука типĕ, ток ирттермен япалапа (патакпа, пластикпа) илсе пăрахăр.



Инкеке лекнӗ ҫынна тумтиртен туртса пралук ҫӗре перӗннӗ тӗлтен е оборудованирен 10 метртан кая мар сӗтӗрсе кайӑр.



Инкеке лекнӗ ҫын хӑй тӗллӗн сывланине палӑртӑр.




Пурнӑҫ паллисем палӑрмасан чӗрепе ӳпке реанимацине тума пуҫламалла. Хӑвӑр тӗллӗн е ыттисем пулӑшнипе васкавлӑ медицина пулӑшӑвне шӑнкӑравлӑр.

Хӑй тӗллӗн сывлама пуҫличчен е медицина ӗҫченӗсем ҫитиччен чӗрепе ӳпке реанимаци ирттерӗр.



Сывлама пуҫласан (е унччен те сывланӑ пулсан) ҫынна аяк ҫине вырттарӑр. Васкавлӑ медицина пулӑшӑвӗ ҫитиччен ҫын мӗнле сывланине тӗрӗслесе тӑрӑр.

## 6.8. Тискер чӗр чун сӑхсан е ҫыртсан.

### 6.8.1. Ҫӗлен сӑхсан пӗрремӗш пулӑшу.



Инкеке лекнӗ ҫыннӑн алӑ-ура хусканӑвне чармалла. Урараан ҫыртсан (сӑхсан) ӑна тепӗр ура ҫумне бинтпа ҫыхса хумалла.



Алӑран ҫыртсан (сӑхсан) ӑна кӗлетке ҫумне хуҫлатса бинтпа ҫыхса хумалла. Ҫыртнӑ (сӑхнӑ) вырӑна сивӗ хума юрать.




Пурнӑҫ паллисем палӑрмасан чӗрепе ӳпке реанимацине тума пуҫламалла.

Хӑвӑр тӗллӗн е ыттисем пулӑшнипе васкавлӑ медицина пулӑшӑвне шӑнкӑравлӑр.

Хӑй тӗллӗн сывлама пуҫличчен е медицина ӗҫченӗсем ҫитиччен чӗрепе ӳпке реанимаци ирттерӗр.



Сывлама пуçласан (е унччен те сывланă пулсан) çынна аяк çине выртарар. Васкавлă медицина пулăшăвĕ çитиччен çын мĕнле сывланине тĕрĕслесе тăрăр.

## 6.8.2. Хурт-кăпшанкă çыртсан.



Хурт-кăпшанкă çыртсан унăн сăннине суранран кăларса пăрахăр.




Çыртнă вырăна сивĕ хурăр.

**Аллерги шатри тухсан тухтăртсан сĕнÿ ыйтмалла.**

Медицина ĕçченĕ çитиччен инкек курнă çыннăн сывлăхне сăнаса тăрăр.

## 6.9. Тӑн ҫухатсан.



Паллӑсем: шурса кайни, сасартӑк кӗске вӑхӑтлӑха тӑнне ҫухатни.

Инкеке лекнӗ ҫынна айккинелле выртттармалла, галстука пушатмалла, ҫиелти тумтирӗн ҫухине вӗҫертмелле, шӑлавар пиҫиххине пушатмалла, пушмакне хывмалла, уҫӑ сывлӑш кӗртмелле.




Енчен те 3–5 минутран ытла тӑна кӗреймест хӑвӑр тӗллӗн е ыттисем пулӑшнипе васкавлӑ медицина пулӑшӑвне шӑнкӑравлӑр.

**Темле пулсан та тухтӑр патне тӗрӗсленме каймалла, тӑн ҫухатнин сӑлтавне палӑртмалла.**

## 6.10. Шӑнӑр туртсан.



Паллӑсем: кӗтмен ҫӗртен туртӑнни, мышцӑсем туртӑнни, вӑхӑтлӑха сывламанни, тӑн ҫухатни, ҫӑварӗнчен сӗлеке юхни е кӑпӑк тухни, куҫ чарӑлса кайни, чӗлхене ҫыртни. Шӑнӑр туртнӑ чухне инкеке лекнӗ ҫынна (вӑл ӳкет пулсан) тытса тӑрӑр (ан вӑйлӑ ан хӗстерӗр), пуҫне, кӗлеткине суранлассинчен сыхлӑр.



Тытса пăрахасси пĕтсен çын кĕске вăхăтлăха тăн çухатма пултарать.

Инкеке лекнĕ çынна аяк çин вырттарăр, хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.

**Кирек мĕнле пулсан та çынна тытса пăрахсан тухтăр патне каймалла.**

# 7. Тухтăр çырса панă эмелсене ĕçме пулăшасси.




Хăш-пĕр чухне инкеке лекнĕ çыннăн сывлăхĕ малтанхи чирсене пула япăхланма пултарать. Кун пек чухне инкеке лекнĕ çынна сиплекен тухтăр малтанах çырса панă эмелсене ĕçме пулăшмалла.

Пĕрремĕш пулăшу панă чухне (инкеке лекнĕ çын тăна кĕнĕ пулсан) унăн мĕнле те пулин чир пуррипе çуккине (сăмахран, сахăр диабечĕ, юн пусăмĕ пысăк/пĕчĕк пулни тата ытти те) тата вăл мĕнле те пулин эмел ĕçни çинчен ыйтса пĕлмелле.

Инкеке лекнĕ çын хăйне мĕнле туйнине (чире пула) тата унăн хăш вăхăтра эмел ĕçмеллине ыйтса пĕлмелле.

Эмеле сумкăран кăларса ĕçме пулăшмалла.

Хăвăр тĕллĕн е ыттисем пулăшнипе васкавлă медицина пулăшăвне шăнкăравлăр.

Инкеке лекнĕ çыннăн сывлăхне сăнаса тăрăр.

# 8. Инкеке лекнĕ çынна канлĕ вырăн туса выртарасси.



## Аякла вырттарасси:

- Тăн çухатсан.
- Час-часах хăссан.
- Çурăм тата мăй пиççе кайсан.



## Çурăм çинче красене чĕркуççи тĕлĕнче çĕклесе тата хуçлатса:

- Вар-хырăм хăвăлĕ суранлансан.
- Юн нумай çухатсан е шалтан юн кайсан.



## Лартса е таянса лартса:

- Кăкăр кăшкарĕ суранлансан.



**Çурăм çинче, хытă та тикĕс вырăн çинче:**

– Çурăм шăмми амансан.

## 9. Психологи пулăшăвĕ парасси.

**Психологи пулăшăвĕ парасси (уйрăм памяткăра вулăр е пирĕн сайтра).**

@ ФГБУ «ЦЭПП МЧС РОССИИ», 2024